зал мне: „Выходи в татары и оставайся жить здесь“. Епӗ ӑна хам ҫӑвашшине пит ӗйурарӑм—я оказал ему большую услугу своим чувашским происхождением; вӑл хӑй ҫӑвашшинҫен вӑтанмаст—он не стыдится своего чувашского происхождения. Есӗ ҫӑвашне (ҫӑваш иккенне) кам пӗлмест? кто не знает, что ты чувашин; ҫӑваш мӗн пурӗ пӗр миллион та виҫ ҫӗр пин ҫын—чуваш всего один миллион триста тысяч.

ҫӑкӑмла—пятиться назад, упрямиться.

ҫӑкӑмҫӑ—упрямый, с норовом (о лошади).

ҫӑкӑт—сыр; аҫа ҫӑкӑт пуҫларӑмӑр—мы почали ребячий сыр (особый обряд при рождении ребенка); ҫӑкӑт пӗҫерекен—сыровар.

ҫӑл—чуть, едва; вӑл ҫӑл-ҫӑл анҫах ҫунат—лампа горит чуть-чуть.

ҫӑлан—чулан; сенник; ҫӑланта шур кӗпе тумтир—в сеннике белое белье.

ҫӑлах—сухорукий, убогий; урод; ҫӑлах пуҫтарса ҫӳрет—убогий милостыню собирает; ҫӑлах ҫын-увечный человек.

ҫӑлахлантар—увечить.

ҫӑлпар—(ҫӑл-пар) друг от друга; кашкӑр пырсан сурӑхсем ҫӑл-пар саланса кайрӗҫ—увидя волка, овцы убежали в рассыпную, разбежались.

ҫӑлт—очень, весь; ҫӑлт шурӑ—очень белый.

ҫăлха—запутать.
ҫăлха—чулок; ҫăлха пуҫ—носок.
ҫăлхан—запутаться.
ҫăм—вид кружки.
ҫăм—нырять; антăранă кăвакал кутăн ҫăмнă, тет—говорят, растерявшаяся утка нырнула задом.
ҫăмăр—кулак; ҫăмăрпа ҫап—тузить.
ҫăмăрлат—скруглить; вĕҫне ҫăмăрлат—кончик скруглять.
ҫăмăрта—сжимать; тискать; округлить; аҫа ҫĕлен ҫăмăртаса вĕлерне, тет—говорит, ребенок задавил змею.
ҫăмăртан—округлиться; сжиматься.
ҫăмăш—черная птица, которая своим клювом продырявливает ульи.
ҫăмла—жевать.
ҫăмлак—жевка.
ҫăн—истина правда; ҫăн кала—говори правду; ку халап ҫăн—эта речь правдива; куккăшĕ каланă: Вăл ҫăнпе ҫăн, анҫах эсĕ ăна ĕҫлеттерсе суптаратăн—ĕҫке, тенĕ.—Дядя ее сказал: это верно то, верно, но ведь ты ее до крайности изнуряешь работой; ҫăн—очень, весьма; ҫăн аслă наибольший; ҫăн лайăх самый лучший; ҫăннипе по правде; ҫăнласах, ҫăнах действительно; ҫăнлăх справедливость;

ҭăнкă—крутой; ҭăнкă тенипе ҭăнкă ту—крутая прекрутая гора.

ҭăнкăлтат, ҭанкăлтат, ҭăнкăртат, звенеть; ҭăнкăр звук серебра; ҭăнкăр ту звякать.

ҭăпар пестрый; ҭăпарлатса, улалатса пӳтер, хур нанежить.

ҭăпăк чубук.

ҭăпта—рогожа; кули; пирĕн патрисем ҭăпта нумай ҫапаҫҫĕ—наши окрестные (жители) выделывают много кулей.

ҭăрăк—издавать звук зубами; шăлĕпе ҭăрăк тутарать—издает скрипящий звук зубами.

ҭăрăш—ель.

ҭăриклет скрипеть, чирикать; шăрҭăксем ҭăриклетеҫҫĕ—сверчки чирикают.

ҭăрка—стопа; хут ҭăрки—стопа бумаги (480 листов).

ҭăрка—кутать; увертывать; пеленать; моток; аҭана ҭăрка укутывать ребенка; пир ҭăрла—холст увить; ҭăркан—укутываться; лайăхрах ҭăркан—хорошенько укутываться; ҭăркаса ҫых—увязать; пир ҭăркала—холст скатывать;

ҭăркăш, ҭăркаш—драться; капризничать; пĕр пĕрипе ĕлĕкхи пек вăрҫса ҭăркăшса пурăнман—не жили, как раньше, ссорясь друг с другом; аҭа ҭăркăшлана, йунсăрлана пуҫларĕ—ребенок начал капризничать.

ҫăркуҫҫи, сыпăк, колено; ҫăркуҫлан—вставать на колена; ҫăркуҫҫи ҫине ларса—преклонив колена; ҫăркуҫҫи айĕ подколенье.

ҫăрмав—забота, беспокойство.

ҫăрмавсăр—беззаботный.

ҫăрмала царапать; ҫăрмаласа пĕтер—исцарапать.

ҫăрман беспокоиться; аҫасемшĕн ҫăрманни беспокойство о детях.

ҫăрмантар—беспокоить, тревожить, тормозить; утруждать; ĕҫленĕ ҫух ан ҫăрмантар—при работе не тормози.

ҫăс—удлинять; тянуть; растягивать; вĕрен ҫăс—веревку удлинять; ҫăсса кала—схвастать; ҫăсакан хĕр-арăм строптная женщина.

ҫăсăк—продолговатый.

ҫăсăл—тик так (тиканье часов).

ҫăст—вытягиваться.

ҫăт, тӳс, сапăр ту, терпеть, переносить, стерпеть; сносить; ҫынтан йывăр сăмах илтсен ҫăтасси—услыхав неприятное слово, тяжело терпеть; ҫăтмалла мар—невыносимо.

ҫăтăмлă, тӳсĕмлĕ, ҫăтулă терпеливый, выносливый.

ҫăтăмлăх—терпение.

ҫăтăртат—хрустеть.

ҫăтлăх—чаща.

ҫăхă—курица, ҫăхă ашĕ курятина; ҫăхă куҫĕ—куриная слепота; ҫăхă сăри—осеннее моление; ҫăх ҫĕппи—цыпленок; ҫăх вити—курятник; ҫăх-ҫĕпĕ, (курица—цыпленок) куры вообще; пĕр кашта урлă икĕ ҫăхă ҫапăҫаççĕ—чрез насест две курицы дерутся (загадка: глаза); ҫăххăн автанăнни пек кикирикĕ ҫук, у курицы нет гребня, как у петуха. Вĕсем сире пĕркуп ҫăхăшăн мĕн хак паҫĕç? Сколько заплатили они вам за курицу намедни?

ҫей—чай; ҫей ҫашки чайная чашка.

ҫейе—хитрый; льстивый; лукавый; бойкий; ҫейелĕх—козни; уловка; хитрость; ҫейе хăтланакан—злонамеренный; тилĕ пек ҫейе—хитрый как лиса.

ҫейлен—ухитряться.

ҫемҫем курăк подорожник (растение).

ҫемҫук мелкий лук.

ҫен,—ҫен до, пока; ыранҫен до завтра; виççĕ хутҫен—до 3-х раз.

ҫенҫĕке—острога.

ҫерет—черед, очередь.

ҫеркке—чарка: ерех ҫерекки рюмка для вина; пĕр ҫеркке ерех одна рюмка водки.

ҫеҫек—левкой; кисть; бахрома; цветок; оспа; ҫеҫек тухнă—у него появилась оспа; ҫеҫек кăлар—процветать; ҫеҫек

касакан, ҫеҫҫе касакан—прививальщик оспы; оспоприциватель.
ҫеҫекле, ҫеҫеклет украшать; ҫеҫеклен—украшаться, страдать оспой.
ҫеҫен—чистый, ровный; хорошо; красиво; изящно; йепле уйăн тавращĕсем ҫеҫеп! какой красивый на ней паряд!
ҫеҫен—боры на одежде.
ҫӗвӗ, сас ҫӗвӗ, голос, звук.
ҫӗвӗлтет—чирикать (ласточка).
ҫӗкеҫ—ласточка; икӗ ҫӗкеҫ 2 ласточки; тинӗс ҫӗкеҫӗ—морская ласточка.
ҫӗкӗнтӗр—свекла; бушма; ҫӗкӗнтӗр лартрăм свеклу посадил.
ҫӗкӗр, ҫӗкре, понос; слабить; ҫӗкӗртер—слабить; лашана ҫӗкӗртерекен емел пар дать лошади слабительного лекарства.
ҫӗл—щепать (лучину); кроить (ремни); отдирать, раздирать на мелкие части; хăйă ҫӗлсе хур—нащепать лучину; куҫа ҫӗлҫӗл курăнса тăр—мелькать.
ҫӗлӗ—отрезок; ломоть; ҫăкăр ҫӗлли ломоть хлеба; пушăт ҫӗлли лычина; есӗ пысăк ҫӗллӗп кас ты нарезывай большими ломтями.
ҫӗлӗм—трубка; ҫӗлӗм турт курить трубку; пурте ҫăварӗсенҫен ҫӗлӗм тӗтӗмӗ кăларса мăкăрлантарса пыраҫҫӗ—все они идут, выпуская изо рта (букв. из ртов) клубы табачного (букв. трубочного) дыма.

ђӗлкӗм—волокно; нить; ђӗлкӗмлӗ—волокнистый.

ђӗлпӗр—повод (у узды); ђӗлпӗр тытса ҫӳрен ырӑ—святой, ведущий за повод; выљатрӑм утсене пурҫӑн вӗҫлӗ ђӗлпӗрпе—мы пускали лошадей играть на поводьях с шелковыми концами.

ђӗлхе—язык; наговор; ђӗлхесӗр немой; ђӗлхесӗрлен—онеметь; ђӗлхе-ҫӑвар (язык-рот) орган речи; рот; вирлӗ ђӗлхеллисенӗн ђӗлхине ҫӗнтерет, ватӑ ҫынсене тӑнран сухатат—он лишает языка красноречивых и отнимает язык у старцев; ђӗлхе вӗр—ворожить; читать наговор; отчитывать; ђӗлхе пӗлекен хӗр-арӑм заклинательница; ђӗлхеҫӗ ворожея; ђӗлхе вӗрт—велеть читать наговор; ҫӗлен ђӗлхи заклинание от змей; ђӗкеҫ ђӗлхелӗ ҫын—человек с языком ласточки.

ђӗм, ђун-ђӗм дыхание; жизнь; ђунӗ-ђӗмӗ ҫук безжизненный.

ђӗмӗре—железа.

ђӗн—ремень; ђӗмпӗр кутлӑх ђӗн кутлӑх симбирская шлея—ременная шлея; ђӗн йӗвен илмешкӗн для покупки ременной узды; ђӗн пиҫихи ремень; ђӗн патне ђӗн, пушӑт патне пушӑт к ремню ремень, а к лыку-лыко.

ђӗн—звать, приглашать; кликать; отвечать; ђӗнсе кил сходить, позвать; ђӗнсе ил

приглашать; пӗр сӑмах та ҫӗнмест молчит, ни слова не говорит; ҫӗнтер приказать позвать; ҫӗнтерттер сказать, чтобы приказали позвать; салтака ҫӗнтерсе илҫӗ велел призвать солдата; вӑл хӑйӗн сурӑхӗсене йатрап ҫӗне-ҫӗне кӑларать—и он зовет своих овец и выводит их; ҫӗнми пулҫӗ—закусил язык; мӗншӗн есӗ мана нимӗн те ҫӗнместӗн? почему ты мне ничего не отвечаешь? хирӗҫ ҫӗн прекословить; хирӗҫ ҫӗнмесӗр беспрекословный; беспрекословно; безмолвно; ҫӗнмесӗр тӑр молчать.

ҫӗнкеле—просить милостыню; вӑл пурӑнсан—пурӑнсан йытӑпа куппак илҫӗ тет те, ҫӗнкелеме (ыйткалама) кайрӗ, тет; однажды он взял с собой собаку и кошку и пошел просить милостыню.

ҫӗнтӗр—кружево; решетка; ҫӗнтӗр ҫухатрӑм—кружево потеряла.

ҫӗнтӗрлӗ—решетчатый; ҫӗнтӗрлӗ кӗпер айӗнҫе—под мостом с решетчатыми перилами.

ҫӗп—совершенно, весь; ҫӗп тулли—весь полный.

ҫӗпӗ—цыпленок; ҫӗпӗ тухнӑ вылупились цыплята; ҫӗпӗ амӑшӗ—наседка.

ҫӗпӗт—щипать, ущипнуть ҫӗпӗтсе ил—ущипнуть; ман алла вӗлтӗрен ҫӗпӗтрӗ я обжог руки крапивой.

ђӗптӗм — щепоть; пӗр ђӗптӗм тăвар — одна щепоть соли.
ђӗр — сдирать; царапать; йӗппе ан ђӗр— иголкой не сдирать; çав хута ђӗрсе пă- рах — издери ту бумагу; ђӗр сп пӧла, недро, лоно; ђӗрçитти передник, фартук.
ђӗре — сердце; ђӗре сикет—сердце бьется; ђӗ- ре сиксе ӳкрӗ—ёкнуло сердце; ђӗре пу- лӗмӗ—грудобрюшная преграда; епӗ си- ре курсан, ырă тусăмсем, манăн ђӧре тулђӗ савăнăçпа — когда я увидел вас, добрые друзья, то мое сердце наполни- лось радостью; аван йăлана ађасем хăй- сен ђӗрисен çумне хуђђăр—пусть дети воспитают в своем сердце добрую при- вычку; хытă ђӗрелӗ — жестокий; çемçе ђӗрелӗ—мягкосердечный.
ђӗренђе — дрань.
ђӗрес — ведерко, бадья; пăт-ђӗрес—пудовка; ђӗрессӗн-ђӗрессӗн сарă çу, кăларăр, лар- тăр хӗвеле (целыми), черясами корове масло; выставьте его и поставьте на солнце.
ђӗреслет: çумăр ђӗреслеттерсе çăвать—дождь сильно и косо идет.
ђӗрӗ — живой; сырой; свежий; тăпра ђӗрӗ земля сырая; ђӗрӗ кӗмӗл ртуть.
ђӗрӗк — четверть; ђӗрӗк сехет $^1/_4$ часа.
ђӗрӗл—оживиться; выздороветь, исцелиться; воскресать; ђӗрӗлнӗ кун—воскресенье;

ҫӗрӗлӗх—жизнь; ҫӗрт оживить, исцелить; лекӗрсем ҫӗртеҫҫӗ ҫынна им-ҫампа, хӑватпа мар, вӗсенө шӑнмалӑх тапур—доктора вылечивают людей не чудодейственной силой, а лекарствами; поэтому есть основание им доверять; ҫӗртме ҫук—неисцелимый; выҫӑха ҫӗрт—выкармливать; вут ҫӗртсе хураҫҫӗ—разводят огни.

ҫӗрӗп—еж.

ҫӗриклет, ҫӗриклеттер, пищать, чирикать.

ҫӗрке, ҫӑрка, завернуть; мотать (нитку); аҫана кипкепе ҫӗркерӗм—ребенка рубахой завернула; ҫав тутӑрпа ҫӗркесе хур—заверни его в тот платок.

ҫӗркен—завернуться.

ҫӗркуҫҫи, ҫӑркуҫҫи, колено; ҫӗркуҫҫи икерҫи—надколенная чаша; ҫӗркуҫлан встать на колени.

ҫӗрне—коготь; ноготь, копыто; ҫунӑм ҫӗрне вӗҫнех ҫитрӗ—душа ушла в пятки. Тыткала пӗлмен алӑ-уранӑн ҫӗрни вӗҫне шӑрпӑк кӗнӗ, тет. Под ногти рук и ног, неумеющих обращаться (с предметами), попадает заноза.

ҫӗтӗре—дрожать, трепетать.

ҫӗтӗрет—трясти, трепать; ҫӗтӗрев дрожь.

ҫӗҫӗ—сосок; сосцы; грудь; аҫа ҫӗҫӗ ӗмет—дитя сосет сосок; ҫӗҫӗ аҫа—грудной ребенок. Атӑл урлӑ хӗрӗх ҫӗҫӗлӗ ӗне

каҫат (сӳре)—через Волгу сорока сосцовая корова переплывает (борона).

ҫӗ, ҫҫӗ,—бы, кабы; вӑл ан ӳктӗрҫҫӗ—кабы он не упал.

ҫи—служит для образования превосходной степени: ҫи пысӑк—самый большой, ҫи малтан—с самого начала; сперва.

ҫийе вишня; ҫийе йывӑҫҫи вишневое дерево.

ҫик—втыкать, совать; уколоть, шить; ҫиксе хур заткнуть; унӑн кӑкӑрне ҫӗҫӗне ҫикпӗ—его прокололи ножом в грудь; пурнене шӑтӑка ҫик—всунь палец в щелочку; ҫиксе ларт—втыкать.

ҫик: ӑш—ҫик внутренность.

ҫике—локоть.

ҫикен—колотье; мӗне те пулин ҫӗҫӗпе ҫиксе ҫисессӗн, ҫикен ҫикекен пулат, теҫҫӗ—если с'ешь что-нибудь с ножа, то сделается колотье.

ҫикӗ межа, черта; граница, край; ҫикко—ҫиккӗн хир—смежное поле; ҫикӗлен, ҫикӗленсе кай—кувыркаться; ҫикӗленмелле выҫа—играть в кувырканье.

ҫикӗн—наколоться; наклоняться; ҫикӗнсе шырат—ищет наклонившись.

ҫилӗнлет—чирикать.

ҫим—постой, погоди; ҫим ха постойка, погоди-ка.

ҫип: ҫип-ҫип-ҫип так кличат кур.

ҫип—очень, весьма; ҫип-ҫипер очень красивый, очень красиво.

ҫипер—красивый, хороший, вежливый; хорошо; стройный, славный; ҫипер хӗр—красивая девушка; ҫипер аҫа—статный мальчик; уппалан пирӗн ҫиперлӗхӗмӗр тахӑшне кӑмӑла каймалла (тахӑшин кӑмӑлне киммелле)!—не знаю, кому понравится наша с ним красота! (ирония). Епӗ пӗҫӗкҫӗрех-ҫӗ те ҫипертерех астӑваймастӑп—я был еще маленьким и хорошенько не помню.

ҫир—боль, болезнь, недуг. Названия болезней: хура ҫир—антонов огонь; вырӑс ҫир—венерическая болезнь; шыҫӑ ҫир водянка, опухоль; писӗ ҫир, ӑшӑ ҫир горячка; сивӗ ҫир, сайамак, шӑнтакан лихорадка; тута ҫир, рак; ийе ҫӑмлат прилив крови (домовой давит); ват желчь; шӑл суранӗ зубная боль; йун тапни—кровотечение; супас насморок; тытамак—гнет; вар-витти понос; ӑс пӑсӑлни сумасшествие; ҫапан—чирей; ҫирлӗ—больной; ҫирле пуҫла—заболеть. Сикекен ҫир, йерекен ҫир—заразная болезнь; ӗлӗк пӗр арӑм ҫире хывнӑ (ҫире пенӗ) в прежнее время одна женщина притворилась больной.

ҫирле—болеть, хворать; ҫирлекен пурте вилмест—не все больные умирают.

ҷиркӳ—церковь; ҷиркӳре в церкви; ҷиркӳрен из церкви.

ҷитлӗк—маточник.

ҷукмар, ҷупмар—дубина; сыснана ҷупмарпа хӗненӗ—свинью били дубиной.

ҷукун: ҷукун ҫул—железная дорога; ҷукун ҫул сывӑххи мӗн усси пур?—какая польза оттого, что жел. дорога близко.

ҷул—камень; хаклӑ йышши ҷул драгоценный камень; хайӑрла ҷул—булыжник; ҷул хӑма—каменная доска.

ҷул—сколько; мӗн ҷул (мӗн ҷухлӗ) сколько; ҫавӑн ҷул (ҫавӑн ҷухлӗ) столько; мӗн ҷула сутрӑн? пӗр пӑт ҫӑнӑхла сутрӑм—за сколько ты продал? за пуд муки.

ҷуман—чуман; кузов.

ҷуман—мешкотный, вялый, ленивый, норовистый.

ҷун—дух; душа; ҷунтан от души; пӗтӗм ҷунтан-вартан от всей души; ҷунлӑ йапала—животный.

ҷун пӳрен турӑ—бог, который находит душу для новорожденого и приносит душу для передачи другому богу „ҷун ҫуратан“.

ҷун ҫуратан—дух, вселяющий в новорожденных душу.

ҷун сыхлан—дух, оберегающий душу человека во всякое время.

ҷунсӑр—бездушный; ҷунсӑр йапала бездушный предмет.

ҫуп—поцелуй; ҫуп турăм поцеловал.
ҫуп—бежать; скакать; ҫупрăм-кайрăм вăрмана я убежал в лес; Уҫăп халăх лавĕ ҫупать—Осип гоняет мирскую ямщину; васкаса ҫупкала забегать; ҫупса ан сбежать (пусма ҫинҫен, ту ҫинҫен—с лестницы, с горы); ҫупса кайса кил—сбегать; катаҫҫи ҫуп—кататься на лошади, унҫен ку йалан йал тăрăх ҫупкăнта ҫӳресе ӳснĕ—до тех пор она все била баклуши, постоянно бегая по деревне (выросла в бегунах); епĕ ҫупнă ҫухлĕ.. сколько я избегал! ҫупса ҫит—догнать; ҫупса тух—выбежать.
ҫупкăн—бегун; шельма.
ҫуптар — заставить сбегать; упта пĕр-пĕр аҫана ҫуптарас—туда надо заставить сбегать какого-нибудь мальчика.
ҫуптар буланый; ҫуптар лаша буланая лошадь.
ҫура—раб.
ҫурăс—дикий.
ҫус—тес; ҫус илсе килҫĕ—тес принес; ҫус хăма, ҫуслăх обтесанная доска.
ҫуста—тесто; ҫуста пек ҫыпҫăнать — пристает как тесто; ҫуста ҫĕресси—квашня.
ҫутла—тесать; хăмана ҫутла—доску стесать.
ҫу-ҫу—баю-бай.
ҫуҫу—маленькая качель для одного человека; ҫуҫу йарăн—качаться на качелях.

ҫух, ҫухах впору; впопад; едва; чуть-чуть; восклицание: так! ҫух кирлӗ сана, ху малтан вӑрҫтартӑн—так нужно тебе, сам первый дразнил; тӑшмана ҫак ҫух! так и надо врагу! ҫух йытса килтӗм—с трудом притащил.

ҫух время, когда; пӗр-пӗр ҫух когда-нибудь; нумай ҫух много раз; хӗр ҫухне когда были в девушках.

ҫух—бедность; ҫухрахранта ҫунӑм хурланат—и от бедности горюю.

ҫухӑм—чохом; без веса; на—глаз.

ҫухӑн—бедный; ҫухӑнлӑх беднота, слабость; ҫухӑнлан—обеднеть, ослабеть; вӑл ҫухӑнрах пурӑнат—он живет бедно.

ҫухла—смекать, понимать; ху ҫухласа ху пар—сам смекай, сам давай.

ҫухлӗ—см ҫул сколько, столько.

ҫӳк—жертва, дух жертвы; ҫӳк кӗлӗ (жертва и моление), жертвы и моления. Ҫаваш сем ҫу каҫиҫҫен Турра асӑпса хӑйсем (хӑйсен йӑлипе темиҫе тӗҫлӗ ҫӳк тӑваҫҫе. Чуваши в течении лета приносят, по своему обычаю, несколько различных жертв Богу; ҫӳк ту—принести жертву; ҫӳк уйӑхӗ—ноябрь; ҫӳк пуҫӗ—жрец; така ҫӳкӗ—баранье моление, приносится в жертву баран.

ҫӳкле—приносить в жертву (что).

ҫӳклеме—обряд жертвоприношения; ҫӳклеме ҫӳклесен после совершения обряда чука.

ҫӳлĕк—супонь.

ҫӳлмек—горшок, кувшин.

ҫӳпĕк—пакля.

ҫӳреҫе—окошко, окно; ҫӳреҫерен из окна; ҫӳреҫе ҫинҫен с окна; ҫӳреҫе ҫаршавĕ—гардина; ҫӳреҫе хуппи—ставня.

ҫӳреҫе куҫĕ—стекло.

ҫӳреҫе питĕркĕҫи—наболтень.

ҫӳреҫе сули—косяк.

ҫӳхе—полоскать.

ҫӳхен—сполоснуться.

ҫӳхет—полоскать.

ҫылай—порядочно, долго; долгое время; ҫылай тӑрсан тин килтĕм-ҫылайран—спустя долгое время; хĕрсем вӑрмана ҫылайӑн кайнӑҫҫĕ—девушки пошли в лес в довольно большом числе.

ҫыс—почет, уважение; ӑна ҫыс парӑр—окажите ему почет.

ҫыхӑн—поперхнуться; ҫӑкӑр тĕпренҫĕкпе ҫыхӑнтӑм—поперхнулся крошкой хлеба.

ҫыш—толкнуть; ткнуть; шаҫсапа ҫыш колом ткнуть; айӑккинҫен ҫыш ткнуть в бок.

ҫышкӑ—кулак.

У.

у, ăв, трут.

уй—поле; уйри находящийся в поле; уй ҫӳкĕ полевое жертвоприношение; уйри шăрҫăк—стрекоза.

уйа—праздновать.

уйав—праздник; кахала йаланах уйав—для ленивого всегда праздник; уйав кун праздничный день.

уйар, пĕлĕт ҫук кун, безоблачный; светло; ясная погода; пайан уйар—сегодня ясная погода; уйар—Божия коровка; уйарт яснеть (погода); пайан кун уйартат—сегодня проясняется погода; ĕнер уйар ҫанталак пулнă-ҫҫĕ—вчера было ведро; уйарта—в ведряное время.

уйас—уезд.

уйăп—снигирь.

уйăр—отделить, делить, отрезать; узнавать; отлучать; сысна уйăхпа хĕвеле уйăраймаст, теҫҫĕ—свинья не отличает солнца от месяца.

уйăрăл—отделиться; отвращаться; уйăрăлми неотделимый, нераздельный; уйăрса кăлар—выделить; ашшĕ ывăлне уйăрса кăларат—отец выделяет сына; уйăрса пар—уделить; аслă ывăлна та ҫуртран уйăрса пар—выдели и старшему сыну из строений.

уйăрăм, уйрăм, отдельный, отдельно; уйăрнă хурт рой; уйрăм-уйрăм пӳлĕмсем— отдельные комнаты; эсĕ йалан та хăна уйрăм хăтланатăн-ҫке—ты ведь всегда поступаешь по-своему; вăл хăйне уйрăмрах хăтланаҫ—он поступает несколько особенно, по-своему.

уйран—сыворотка; пахтанье; уйран уҫла делать сыворотку.

уйăх—месяц, луна; леш уйăхра в том (в прошлом) месяце; йупа уйăхĕнҫе—в октябре; ҫĕнĕ уйăх — новолуние; тулнă уйăх— полнолуние; уйăх карти —круг около луны; уйăх тĕттĕмленни затмение луны; малтанхи уйăхра Шупашкара, тепĕр уйăхра Хусана, йулашки виҫҫĕмĕш уйăхра тула тухрăм ҫӳле пăхрăм, уйăх тулас вăхăт ҫитнĕ-ҫҫĕ — вышел я на двор посмотрел на небо—наступало время полнолуния; вăл виҫĕ уйăхĕпех ҫирлесе ирттерҫĕ—он прохворал все три месяца; виҫĕм куп каҫ уйăха вупăр ҫирĕ —третьего дня вечером месяц с'ел упырь (т. е. было затмение луны); уйăх ҫути— лунный свет; уйăх ҫапнă ҫын—лунатик.

ука—позумент, серебряный или позолоченый галун; мишура.

укалҫа—околица; укалҫа хапхи ворота; укалҫаран тухрăм, ут ҫултăм—вышел я за околицу и накосил сена.

уксах—хромой; убогий; ватти-вĕттипе, уксах суккăрĕпе сана асăнатпăр поминаем мы тебя все: старые и малые, хромые и слепые; уксах-ҫалах пуласран хăтарать—избавляет от уродства; уксах туйи—костыль.

уксахла—хромать.

уксăм—вид чеснока.

укҫа—деньги и денежка; хут укҫа ассигнация, кредитный билет; виҫĕ пус пĕр укҫа—1 копейка; укҫапăн пар (тӳле) заплати деньгами; укҫалла выҫа—играть в деньги; ун хапăлĕ ҫук—у него нет средств (д. Юрмикейкиным, Шумат. в., Ядр. у.); укҫалă ҫын—денежный человек; укҫасăр ҫын—безденежный человек; карман тĕпĕнҫе укҫа виҫ пус та пулсан ҫӳретмесессĕн, укҫаран татăлатă, теҫҫĕ—если не будешь носить на дне кошелька хотя бы копейку денег („3 коп."), то день[illegible] не будут водиться („от денег оторве[illegible]"); укҫа пух—копить деньги; укҫа салат—тратить деньги; укҫа ҫул касать—деньги рубят камень; укҫа хыҫҫăн кайман ҫын—неподкупный человек; укҫа ҫапакан, укҫа тăвакан—монетчик; укҫа усрамалли вырăн—сберегательная касса; укҫалла илтĕм—купил за деньги; укҫа ҫунин—блудящий огонек; укҫапăн йар посылать

деньгами; укçалă-çуха — украшение у девочек; обвешанное на коже серебряными монетами; икĕ пĕрер тенкĕлĕх укçалла икĕ путек илсе йатăм — за 2 серебряных рубля я купил двоих ягнят; укçа катса пар—удерживать деньги; çити-çитми укçа гроши.

укçу—шерстобитный лук.

ула—пестрый, полосатый, пегий; улаппа вяхирь.

ула—выть.

ула кайăк—дятел.

уланкă—окунь.

у атăпа—вяхирь.

улаҫа—пестрядь.

улăх—луг, болото; улăх кĕпçи шкерда (растение).

улăх, хăпар, восходить.

улăм—солома; улăм пĕрҫи стебель соломы.

улăп—великан, богатырь, слон.

улăп тăпри холм, бу

улăш, улăштар менять, выменивать; ошибаться; улăшу обмен; ошибка; манăн кунта килни улăшу пулҫĕ — я пришел сюда по ошибке.

улăшăн—измениться, перемениться.

уллах, улах, уединенный, скрытный; уллахăн втайне, наодине; вечеринка молодежи.

улма: çĕр улми картофель; пан-улми яблоки; улма яблоки (у вир-йал).
улма шӳрпи—картофельный суп.
улпут—господин; барин; улпут майри—барыня.
ултав—обман.
ултавçă—обманщик.
ултала—обмануть.
улталан—быть обманутым.
ултă, улттă—шесть; улттăмăш—шестой; ултшар по-шести; улттăн—шестеро.
улу—вой.
ум—перед; алăк умĕ крыльцо; кăмака умĕ шесток, чело печи; вилес умĕн—накануне смерти; куç умĕнҫе—пред глазами; умлă, умлă-хыçлă по-порядку, попеременно; умран ирт—пройти мимо; ман умран пыракан çын çĕр çинҫен темĕскер илҫĕ те кăсйине ҫикрĕ—человек, шедший впереди меня, что-то поднял и сунул в карман.
ун—(род. п. унăн, от; вăл—он), ун ҫухнехи—тогдашний; ун ҫухне—тогда; ун пек—такой; унтан ыйт спроси у него; унтан после этого; оттуда; унта там; унта-кунта туда-сюда; унсăрăн—без него; без этого.
уна—месить, валять тесто; катать.
ункă—кольцо; круг.

упа—медведь; упа вырӑнӗ—берлога; упа ҫури — медвежёнок; есӗ упа курнӑ-и? видел-ли ты медведя?

упален—ползти на брюхе; упаленсе кӗр, шуса кӗр—запалзывать.

упӑлтӑк—восклицание на свадьбе, когда порядочно выпьют.

упӑте, ҫарлан, обезьяна; мартышка.

упӑшка—муж; супруг; упӑшки, ачисем тулалла тухса кайсан, арӑмне: муж, когда дети вышли на двор, жене.

упра—хранить; защищать; оборонять, спасать; усалтан—тӗпӗлтен сыхла, упра—от всего злого избавь, защити!

упрам—дух, хранитель человека во время ночи, сна.

упрук—оброк.

упшур—обжора; упшурлан—сделаться обжором.

ур—беситься; йытӑ урса кайнӑ—собака взбесилась; урнӑ йытӑ бешеная собака.

ура—куча, груда; ут ури—куча сена; улӑм ури—куча соломы.

ура—нога; ура кӗли—пята, пятка; ура йӗрӗ, ура пусӑмӗ, ура лаппи ступень; ура пиҫӗ—под'ем; ура пусси—стремя; ура тӑли—онучи; ура хырӑмӗсем икры; ура тупи—голень; ура тупанӗ — подошва; ура тӗпӗ ступня; ҫара уран—босой;

хура уралă черноногий; ултă-уралă хурт —шестиногая пчела.

урай—пол; кукка урайĕнҫе выртрĕ—дядя лежал (спал) на полу; пӳтĕм урайĕпех (урай талккăшĕпе) хут таврашĕ салан-са выртаҫ—по всему полу валяются бумаги; кукка урайне выртрĕ—дядя лег на пол (на полу).

урала—складывать в кучу.

уралан—вставать на ноги; начать ходить; аҫа, пăру, путек ураланнă—дитя, теленок, ягненок стали ходить.

урам—улица; урамри уличный; урам шăл—мести улицу.

урапа—телега; воз; колесо; урапа пăти—чека; урапа сикки рессоры; урапа шăлĕ спица в колесе; кĕлте урапи—снопoвая телега; пилĕк урапа утă—пять возов сена; урапа куса тăран колесо; урапа-па ҫу сĕрес—надо помазать телегу (маслом); урапасайран (урапа—серен) пĕрер ҫул хурса тухнă—на каждую телегу положили по камню.

урă—трезвый.

урăл—отрезвиться; урăлса кайнă—ушел отрезвившись; урăлăх—трезвость.

урăх—другой, иной; кроме, больше; санран пуҫне урăхне пĕлместпĕр—кроме тебя другого не знаем; урăх ан пар, ҫитĕ—достаточно, больше не давай.

урăхла—по другому, иначе; урăхла каласан иначе говоря.

урăхлан—измениться.

урлă—чрез, попереg; Атăл урлă—через Волгу, заволожье; урлă пирлĕ крест на крест; вдоль и поперек; урлăкашта перекладъ; урлав, урласси поперечина, запор; урлă ту, урлă пыр нарушить; урлă сак нары; урлă шăл коренной зуб; урлă та пирлĕ суллан—качаться в разных направлениях: вдоль и поперек.

урлăш—поперечина, ширина.

урпа—ячмень.

урçа—вдовец.

урçа—загривок (у лошади).

уртăн, çакăн, виснуть; каштаран ан уртăн не висни на шесте; ан уртăнăр урттăш йывăçне пахçарта улма йывăç пур çухне не висните на можжевельнике, когда у вас в саду есть яблони.

уртмах, уртмах хутаççи, кошель большой у „мăн кĕрÿ" на свадьбе.

уртташ, урттăш йывăçĕ, можжевельник.

урттăш кайăкĕ—глухарь.

урхалăх—чересседельник, поперечник.

урхамах—горячий (лошадь).

ус—висеть; усăк хăлхалă—отвислые уши; усăн—отвисать.

усал—злой, дурной; усал-тĕсĕл, усалăх зло; усаллăн пăхат злобно смотрит; усал терике усал злой презлой.
усал кăмпа—поганка.
усал шăршă—вонь.
усă—польза, выгода; усăлă полезный, выгодный; усăсăр бесполезный; усă кур воспользоваться, выгодать; усă кўр приносить пользу.
усăк, усăк хăлхалă отвисшие уши.
усăн—вешаться, свешиваться; унăн йанаххи усăнса тăрат—у него подбородок свешивается; усăнса çўреп—слоняй. Хăмлисем алса пўрнески пек усăна—усăна тăра пуçларĕç—шишки хмеля навцели (на плетях) подобно пальцам рукавиц.
услам- прибыль, барыш; рост; услама пар--отдавать в рост (на проценты); услама çўре —заниматься мелкой торговлей (в развоз или в разноз) усламăç, усламçă барышник.
усра, упра, беречь, воспитывать, хранить; держать, сысмана ашĕшĕн усраççĕ свинью (свиней) держат из за ея (их) мяса.
усрав—приемный, приемыш; усрав ывăл приемыш; усрав хĕр приемная дочь; усрав вăрман—роща.
уç—открывать; вскрывать; отпирать; алăк уç—отворять, отпирать двери.
уçă—открытый, свободный; свежий; уçă çын—открытый человек.
уçăл—отрываться; освежиться.

уҫла, ҫу уҫла, ӳйран уҫла, бить масло, сыворотку; уҫласа хур—пахтать.
уҫлам, уҫлам ҫу—масло.
уҫланкă—полянка.
ут—лошадь; ут кĕтĕвĕ—табун; ут утлан—садиться на лошадь; ут таврашĕ—упряж.
ут—шагать, шествовать; аран уткала ковылять; утма ҫул—тропа; утма ҫулпа килтĕм—пришел тропой; утнă ҫĕрĕр утма пултăр, тăнă ҫĕрĕр тĕме пултăр. Пусть то место, где вы ходите, будет (ровно, как) тропинка, а то место, где вы стоите, пусть будет (высоко и тв рдо, как) холм. (Тут желание жениху и невесте).
утала см. ултала.
утаман—атаман; Разин тухне ҫăвашран ҫирĕме йахăн утаман пулнă—во время Разина из чуваш было около 20 атаманов.
утă—сено; утă ҫулакан косарь, косец; утă капанĕ—стог сена; утă ҫулни—сенокос; ут ури стог сена; утă ҫине—на сено; утă уйăхĕ июль; утă тиеме кай—ехать за сеном.
утă—остров; ҫитмĕл тĕ ҫиççĕ тиĕс уттăнçен... из-за 77 островов.
утăкка—слово, которым убаюкивают детей.
утăм шаг; загон (особая мера его в Ядрин. у.,
утлан—сесть верхом; утланайрăм утăн улăне, ҫăкрăнайрăм Хусан хулине. Сел я вер-

хом на пегую лошадь и кругом об'ехал Казань город,
утмăл шестьдесят.
уту—уту крик для примапки уток.
ух—мыть; стирать; кивать (чем).
ухата—охота; ухатана çӳре—охотиться; ухатана çӳрекен—охотник.
ухă—лук; стрела; ухă пĕкки дуга, лук.
ухмах—дурак; глупый; ухмахшăн тĕнҫе тикĕс—для дурака мир гладок; ухмаха йер—с'ума сойти; ухмах йерт—свести с'ума: хĕр йалтах аҫана ухмаха йертнĕ—девушка совсем с'ума свела парня. Ах, ку ухмаха! Ох, этого бы дурака! ухмахлап—блажить; дурачиться; ухмахлантар—морочить.
ухтар—искать, обыскивать; в Чеб. у. ухтар — помоги подняться, взобраться вверх; мана пӳрт тăрне ухтар—помоги мне подняться на крышу дома.
ухтар—заставить мыть белье.
ушай, ушай йупи—столб, косяк у очага, горнила.
ушкăн—толпа, куча, сборище; артель; группа; стая; гурт; халăх ушкăнĕ тăрат—стоит толпа народу; утă ушкăнĕ—куча дров; суту-илӳ тăвакан ушкăн—компания торговая; вĕçен кайăксен ушкăнĕ стая птиц; ушкăнпа сут—продать гуртом; ушкăн-ушкăнĕпе — вереницами;

епир ушкăнĕ-ушкăнĕпе (ушкăн-ушкăнпа) çӳретпĕр—мы ходим вереницами; унтан вĕсене халăха пурне те ушкăнăн йешĕл курăк çине лартма хушнă —потом он велел им рассадить весь народ группами на зеленой траве.

Ӳ

ӳк—падать; сбавить; определиться к месту; слететь; çӳлтен астумасăр ӳкрĕ упал нечаянно сверху; тухса ӳк (çуна çинҫен) вывалиться (из саней); выпадать. Ылттăн пĕкĕ, кĕмĕл ункă, татăлса ӳкĕсрен хăратăп; хушшăмăрсем инçе-çке курăймасран хăратăп.—У золотой дуги серебряное кольцо; боюсь, как бы оно не оторвалось и не упало; между нами очень далекое расстояние: боюсь, что мы будем иметь возможность видеть (друг друга).

ӳкем—связка, моток.

ӳкер—писать; начертать; сăн ӳкер—писать образ, изображение.

ӳкер—валить, уронить; астуман ҫухне ӳкер (вут) заронить; хакне кăшт ӳкерме йурат—цену немножко можно сбавить; вара хăйне кăлаваран ӳкернĕ—потом его отрешили от должности головы.

ӳкерттер—заставить сбавить; прицениваться; торговаться.
ӳкерҭӗк—выкройка.
ӳкӗ, ӳхӗ, филин.
ӳкӗн—печалиться, раскаиваться; сожалеть; каяться (в чем); ӳкӗнни—раскаяние.
ӳкӗт—наставление, проповедь; ӳкӗте кил—убеждаться; ӳкӗт кӳрт—уговорить; нумайӗшӗ ӳкӗте кӗрсе—многие, будучи наставлены...
ӳкӗтле—наставлять, урезонивать; упрашивать; убеждать.
ӳлӗм, ӳлӗмрен после, впредь, на будущее время.
ӳпӗн—опрокинуться.
ӳпӗнтер—опрокинуть.
ӳпке—лёгкое.
ӳпкев—упрек; гнев.
ӳпкеле—обижаться; гневаться, укорять; роптать; йулташа ан ӳпкеле не кори товарища; ан ӳпкелӗн ӗнгӗ аҭам! не прогневайся сынок; ӳпкелемесӗр безропотно.
ӳпле—мякинница.
ӳпне, ӳпнелле, ӳпмелле плашмя, вниз лицом; ӳпне выртса шыв ӗçрӗм легши плашмя пил я воду (из песни).
ӳпне куç—унылый, печальный взор.
ӳпне çăпан—золотуха.
ӳпре—мошка.
ӳпрем—упрямый.
ӳреҭе—искосина; нахлестка; йӗс ӳреҭе мод- [illegible] (у повозки).

ўркев—лень; ăна ўркев килнĕ—к нему лень пришла.
ўркен—лениться.
ўркенђĕк—недеятельный.
ўс—расти, выростить; епĕ çуралса ўснĕ йал Юрмикейкипа Скопырлђа, йапасал) йатлă —деревня в которой я родился и рос, называется Юрмикейкипа (Копырля, Явазал); ўстер—вырoстить; ўссе çитнĕ —взрослый.
ўсе—тăрап (йапала)—растение.
ўсĕмлет—способствовать, поспешать; ĕçлес ĕçе ўсĕмлетсе пыр—способствуй работе.
ўсĕмлĕ—быстро; ўсĕмлĕ ђул, çўре быстро бегать, ходить.
ўсĕн—быстро идти, спорить; увеличиваться; пайап ĕç ўсĕнет—сегодня работа спорится.
ўсĕр—пьяный; хăнисем ўсĕр кайсал хуçи вара: хăнасем пит аван кайрĕç, тесе калаť—когда гости уйдут пьяными, хозяин говорит: гости ушли очень хорошо.
ўсĕр—чихать, кашлять; ўсĕрсе çурса тултарђĕ ку—этот нахаркал.
ўсĕрĕл—опьянеть; ерех ўсĕрĕлиђђен ан ĕç —водки не пей до пьяна.
ўсĕрт—спьянить; поить до-пьяна; ўсĕртиђђен ĕçтерђĕç—напоили до-пьяна.
ўси—ўсми хĕрсем—плохо растущие девушки.

ӳслĕк—кашель.
ӳстер—выростить, воспитать; добавлять; умножать; хак ӳстер—поднять цену; йывăççем ӳстер—насадить; пăтран пĕрер пус ӳстерпĕ—добавили по копейке на (каждый) пуд; ӳстерни—умножение, увеличение; воспитание.
ӳт—тело; мясо; плоть; çын ӳҫĕ—тело человека; ӳт çипҫи—нательный; ӳте кĕни—разговенье; ӳтрен тухни заговенье.
ӳтлен—воплотиться.
ӳтлĕ—телесный; мясной, жирный.
ӳҫӳк (ӳй ҫукĕ) жертвоприношение. Çавăн пек пирĕн йалта та çапла сумăр ӳҫӳкĕ тăваççĕ.. Тăвасса тата çӳлленех пĕр вăхăтра тумаççĕ: хăш ҫухне иртереххĕн, хăш ҫухне кайараххăн тăваççĕ. Таким же вот образом устраивают моление о дожде и в нашей деревне... кроме того, совершают его не каждый год в одно и тоже время: иногда его справляют пораньше, а иногда попозднее.

Х.

хавас—радостный, веселый, охотно; хавас хыпар—радостная весть; хавассăн йышăн—принимай охотно; çынсем унта ĕçлеме пĕртте хавас пулман—работать там люди не имели никакой охоты; ăна

йаланах хавас итлесе пурăнтăм—я всегда охотно слушался его; аҫа-пăҫана хавас ҫын—человек, любящий детей.

хаваслан—веселиться, радоваться; епĕ киле таврăнсан аҫасем хавасланҫĕҫ—по моем возвращении домой радовались дети.

хаваслантар—обрадовать.

хавхалан—усердствовать, стараться.

хавшак—слабый; трусливый; хавшак ҫĕрелĕ слабый сердцем; пирĕн асатте хавшанкă, (хавшак) наш дед дряхлый.

хавшаклан—слабеть, ослабеть.

хавшат—торопить.

хай—тот; помянутый раньше; хай лаҫра ҫурăк алтăр выртатҫĕ-и?-кайса илсе килха, принеси-ка тот расколотый ~~алдырь~~ (большой ковш), который лежал в лачуге.

хай пўрен злой дух; определяет, дает жизнь.

хайар—злой, сердитый; жестокий; свирепый; строгий; атте хайаррăн кăшкăрса йаҫĕ—отец сердито крикнул; хайаррăн таврса парат—жестоко расправляется. Ес тутарла хайар пĕлетĕн иккен, а ты, оказывается, отлично знаешь по-татарски.

хайар—дух, который вносит в среду людей споры и драки. Ей ырă хайар, хайарăнтан хăтарăнтан есĕ сыхла—добрый злой дух! от злости ты избавь нас! акă

спре, хайарсем, укçа паратпăр — вот вам, злые духи, деньги жертвуем.
хайарлан — свирепеть.
хайар ути трава от порчи.
хайар сунасси — коварство.
хайар çырли — гонобобель.
хайла — уловка; способ; нимен хайла та тупаймастăн çак çынсене çапăçтарма — не можешь найти никакого способа, чтобы заставить этих людей подраться друг с другом.
хайман — карман; большой кожаный кошелек.
хайманлат — наполнить карман деньгами; хайманлатса мул тытма пар! дай, наполнив карман с деньгами, держать богатство.
хайçă, хаçă — ножницы.
хак — клин в одежде.
хак — право, правота, истина; цена, плата; хĕр хакĕ цена невесты; хак пар — дать цену; воздать по справедливости; хак пĕл знать цену; признать за истину; хак хур — наценить; хак хуш повысить цену.
хакăл: ăс-хакăл ум.
хаклан — вздорожать.
хаклă — дорогой, ценный; пуйан улпутсем йапала таварăшне хаклăран хаклă парса илеç, ĕтĕр (илессĕ пулĕ) — богатые господа, наверное, покупают вещи за са-

мую дорогу цену (заплатив дороже дорогого).

хаклăлан—вздорожать.

хаклăлат—поднять цену, удорожить.

хал—сила, здоровье; хал ҫук—нет силы, возможности; халсăр бессильный, больной.

халăх—народ.

халĕ—теперь; халӡхи—теперешний.

халлан—удивляться.

халлап, халап, сказка, басня, речь; халлап йар—болтать, выдумывать; ҫын халлапĕ сăмахсенӡен пулат—речь человека состоит из слов; халлап ҫапса хапха тăррипе улăхаймăн, йумах йарса йуман тăррипе улăхаймăп тесĕ,—с болтовней на ворота не влезешь, со сказками на дуб не залезешь.

халлапҫă—рассказчик, болтун.

халлĕн: хĕр-халлĕн девство; вăл кĕпе тăхăнмаӣ халлĕнех килне таврăнна,—и он так без рубашки и вернулся домой; вилнĕ халлĕнех килне турттарса таврăнна,—и его так мертвого и привезли домой.

халтăртат—слишком быстро разговаривать.

хам—я сам; ху—ты сам, хăй он сам; хамăр мы сами, хăвăр вы сами, хăйсем они сами, хам аӡа—свое дитя; епĕ ăна хамăнне икĕ пăт тырă патăм,—я дал ему моих собственных 2 пуда хлеба.

хаман прочный, крепкий, поский; здоровый (материя, кожа).
хамлат—легонько, тихо лаять.
ханкăрма—колокольчик.
хапăл—благополучие, здоровье, сила; хапăл ил—получать здоровье.
хапăл ту принимать.
хапсăн—желать; ҫын йапалине хапсăнасси—желание чужого добра.
хапха—ворота; пусă хапхи—полевые ворота.
харам—тщета; харам ҫийекен, харам пыр—дармоед; харам пŏт—обеднеть совсем; харам ĕҫ—бесполезная работа; ĕҫĕр харама кайтăр—пусть ваша работа будет бесполезна.
хар: харпăр каждый.
харăлтат—храпеть.
харăс—вдруг, дружно; харăс кăшкăраҫҫĕ—дружно кричат.
харкам—каждый.
харлат, харлаттар—храпеть, мурлыкать.
харсăр—трудолюбивый; старательный, обидчивый; ҫав Пайтукап хăй пит харсăр пулнă, ҫула пахҫа ҫимĕҫĕ пит нумай тунă,—этот Пайдугап сам был очень трудолюбивый и летом садил очень много огородных овощей.
хархаш—скандалить.
харша: куҫ харши—ресница.

хас: хас кĕтӳ! иди в стадо! (крик, с которым гонят коров в стадо).
хастар—бережливость, аккуратность.
хастарлă—бережливый; хастарсăр небрежный, тупой.
хаçмăк—головной убор у женщин, надеваемый на голову.
хаť—вот.
хатĕр—готовый; готово; приготовлено; хатĕр тăр—быть начеку (начику).
хатĕрле—готовить; запасать; çула çиĕç хатĕрле, хĕлĕн хырăмĕ пысăк,—летом готовь корму, у зимы брюхо большое; хатĕрлесе хур—заготовлять.
хашака—багет.
хашка, хашла учащенно дышать (напр., после беготни).
хашкан—хрипеть, задыхаться.
хăв, ху—гонять, выгонять, преследовать; хуса кăлар—выгнать.
хăва ива; хăва кăţаки—верба; хăвалăх ивняк; çĕмĕрт çеçки хăвана йавăнаť—черемуховый цвэток вокруг ивы обвивается.
хăвала—гонять; хуса кăлар—выгонять; хăваласа йар—прогнать; хăваласа кӳрт—загнать; хăваласа çит—настигать; ман хыçăмран икĕ çын мана хăваласа килеççĕ,—за мною гонятся два человека.

хăван—радоваться; веселиться.
хăвар—оставлять; упускать; калаҫа хăвар—завещать; пăрахса хăвар—покинуть; леҫсе хăвар—отвезти; хăвармалла мар—неотложный; сиктерсе хăварсам—пронеси (несчастие, беду)!
хăват—сила, крепость, могущество, сила духа, способность души; хăватлă сильный, крепкий; хăватлă ҫил буря; хăватлан—укрепляться, усиливаться.
хăватлан—усиливаться; стать сильным, могучим.
хăватлат—усиливать, укреплять.
хăватсăр—бессильный, малочисленный.
хăватсăрлан—ослабевать, обессилить.
хăвăл—дупло.
хăвăллă—дуплистый; со многими дуплами.
хăвăн—твой (род. пад. от ху—ты сам), хăвăрăн, хăрăн ваши.
хăвăрт, ҫас, быстрый; хăвăрт калаҫни—скороговорка; хăвăрт ту спроворить; хăвăрт шухăшла—сообразить; хăвăрт ҫÿрекен скороход.
хăй сметь, осмелиться.
хăй он сам; хăй тĕллĕн сам собою; независимый.
хăй ҫикки, хăҫикки, подставка вилообразная, из железа, для лучины.
хăйаккăн—боком, на сторону наклониться; вăл хăйаккăн выртать—он лежит на боку.

хăйар—огурец; мăн хăйар тыква.
хăйах—осока.
хăйă лучина; хăйă ҫути лучинный свет; хăйă ҫут—засвети лучину; хăйă ҫутас вăхăт сумерки.
хăйăр—песок; хăйăр ҫулӗ—песчаник; хăйăр хумалли—песочница; хăйăрлă ҫӗр—песчаная земля; хăйăрлă тăпра—супесок.
хăйӗн—свой (род. п. от хăй он сам); унăн хăйӗн ачи-пăчи ҫук—у него самого нет детей.
хăйлăх полено для лучины.
хăйма—сливки; сметана; сӗтсем ҫинчен хăймисене пуҫтар-ха—сними-ка сливки с молока.
хăймалу—сливочный; хăймалу икерчи—вид блина, оладья со сметаной.
хăйматлăх посаженый отец.
хăйпăт, тӗпрет, колупать, крошить.
хăйра—точить; пуртă хăйраҫҫӗ—топор точат.
хăйра точило; алă хăйри—ручное точило; ҫавра хăйра—круглое точило; хăйракан—точильщик.
хăйу лента, тесьма.
хăйулӑ—смелый.
хăйулăлан—сметь.
хăйусăр—несмелый.
хăйулăх—смелость.

хăла саврасый, похожий на верблюда.
хăлаç—обхват, сажень; алă хăлаçĕ маховая сажень; пилĕк хăлаçран, пилĕк хăлаçран хурăн лартса кайнă,—через каждые пять сажень посажены березы; икшер хăласлă йумансем—дубы по 2 сажени в обхвате.
хăлат—кулада (птица—мышелов).
хăлăп—скобка; ручка, рукоятка; хăлăп вырăнĕнтҫен тапраннă—скобка двинулась с места; алăк хăлăпĕ—дверная скобка; вите алăкне хăлăп çаптартăм—я велел прибить к двери конюшни скобку.
хăлтă—рыхлый; шаткий; слабый.
хăлтăлан—рыхлеть, слабеть.
хăлтăлат—зарыхлять, ослаблять.
хăлтҫăк—ось.
хăлха ухо; хăлха çунатти нижняя часть уха; моча уха; пĕтҫĕк хăлхалă çын корноухий; хăлхаран кала—говорить на ухо; хăлхана тҫик—слушать; хăлха алки—серьги; подвеска; хăлхасăр глухой; хăлхасăр пул—глохнуть.
хăма—доска; тҫул хăма каменная доска.
хăмаç—кумач; красная бумажная материя; аршăн çурă хăмаç (хăматҫ)—полтора аршина кумачу.
хăмăл стебель; жниво; вырнă хăмăл жниво.
хăмăр—бурый, желтосерый цвет; хăмăр ĕне бурая корова.

хăмăр—достаточный, многий; достаточно, довольно, много; вăл хуртлă хăмăрлă—он достаточно богат пчелами.
хăмăр—русый, дымчатый; серый; хăмăр кун—серый день.
хăмăт—хомут.
хăмăш—камыш; тростник; хăмăшлă—камышистый; хăмăшлăх тростник; хăмăшлăхран из камышей.
хăмла, хăнăла, жеребиться.
хăмла хмель; хăмлана кай—идти за хмелем.
хăмла çырли—малина; хăмла çырлилĕ çын (хăмла çырли пур çын),—человек, у которого есть малина; хăмла çырли йывăççи—малиновый куст.
хăмпă пузырь; пулă хăмпи—рыбий пузырь.
хăмпулат напузырить.
хăмсан, ăмсан, хапсăн,—завидовать (чему), зариться (на что).
хăмсар—грозить, ударить в воздух; тимĕрпе хăмсарсан, тимĕр пĕр ҫике тăрăшшĕ (тăрăш) тăсăлат, теççĕ,—говорят, что, если замахнешься на кого-нибудь железом, то железо вытягивается на целый локоть.
хăн—жеребенок; çĕнĕ çул иртсен, ут хысçăн хăпне йертсе пар—после нового года дай жеребенка.
хăна—гость; хăнана кайăр—в гости идем-те; хăна-вĕрли пуçтарăнпă ҫух, хуçа майри

хĕпĕртет, — когда соберется круг гостей, жена хозяина радуется; хăна-вĕрле пурте хуçан — гости все принадлежат хозяину; хăналăха тăхăр кун — для гощения 9 дней; хура çĕрĕн хăнисем — гости темной ночи; хăна пул — угощаться; хăна ту — угостить; хăна киле гостиница.

хăнăх — привыкать, освоиться, свыкаться, приучаться.

хăнкăрав, хăнкăрма, шăнкăрав — бубенец.

хăнтăла, хăнкăла, клоп.

хăнтăла патши — жук.

хăнтăр — тесьма; оторочка; кĕрĕке хăнтăр тытнă — полушубок обшит кругом оторочкой.

хăнтăр — ăмак резь в животе.

хăнţăр — пучить, таращить глаза; хăнţăр куçлă — мигающие, щурящие глаза.

хăпар, кĕр, взлезать, подниматься; лазить; тĕтĕм хăпарать — дым поднимается; вăл ту çине хăпарнă — он поднялся на гору; мунţа ţул хыçне хăпарса выртрăм, — я (в бане) лег за каменку.

хăпартма, çăмарта хăпартми, яичница.

хăпарту — калабашка; ситный хлеб (ячменный.

хăпăт — драть, отрывать; хăпăтать — снимает то, что лежит плашмя.

хăпъăк—маленькие щипцы, клещи; пинцет; куç хăпъăкĕ—пинцет для глаза, щипчики для удаления волос из глаза.

хăр, хăр сурапла çын расслабленный человек; алă хăрат рука сохнет.

хăра—бояться, тревожиться; робеть; ъас хăраса ӳкекеп çын—малодушный человек; хăравçă трус; енĕ хăраса ӳкрĕм то я перепугался и...

хăрат—пугать, угрожать.

хăрах—один из пары; хăрах куç—один глаз; хăрах куçлă одноглазый; хăрах урапа сиксе çӳрет прыгает, скачет на одной ноге; хăрах аллине пĕр ъĕрес сăра тепĕр аллине сăра курки илнĕ в одну руку кадочку пива, а в другую руку пивной ковш взял он; йĕкĕрешĕп хăраххи вилнĕ—один из близнецов умер.

хăрăк—сухой, высохший; хăрăк турат сухой сучек.

хăрăлтат—хрипеть; сипеть; пыр ыратнипе хăрăлтат—от боли в горле сипеть.

хăрăм—сажа, копоть, смоль; унăн кĕпи хăрăм тесеп хăрăм—на нем рубаха сажа сажей.

хăрлат—храпеть (собака).

хăрман, кăрман, воз сена.

хăрманлат—нагрузить; хăрманлатса кӳлте турттарса килет—он везет телегу нагруженную снопами.

хăрнă (хăр) алăлă—сухорукий.
хăрпан—дух, бог жертвы, высущивающий члены, кости человека.
хăрпăк—ресница.
хăрпу—околыш.
хăрт—сушить, осушить.
хăрҫăк—чесалка для лошадей.
хăрҫăкла—чистить чесалкой лошадь.
хăрушă—страшный; хăгушăлăх ужас; арăслан хăрушшăн кăшкăрса йаҫĕ—лев страшно зарычал.
хăс—блевать, изрыгать; ҫирлĕ ҫын хăсат—больной человек блюет; хăсас килет—тошнит; тинĕс ҫинҫе хăстараҭ—на море тошнит; хăсăк—отрыжка.
хăс—шипеть; хăс ту шипеть (гусь).
хăҫан, хăҫҫан, когда; хăҫан та пулин когда-нибудь; кирек хăҫан та когда бы то ни было; всегда; хăҫантанпа вара есĕ, аҫу ыйтсассăн, унăн умĕнҫе ҫĕнмесĕр тăракан пултăн? тенĕ,—с каких это пор ты стала молчать перед отцом и не отвечать на его вопрос; хăҫанҫен доколе.
хăта—сват; епир хăталлă пултăмăр—мы стали иметь свата (сватьев).
хăтар—спасать, сохранить.
хăтăл—избавиться, спасаться, увильнуть; унтан хăтăл увильнуть от него; вара анне ку ҫиртеп хăтăлаймĕ, вилĕ тесе шухăшларăмăр,—потом мы подумали,

что мать уже не оправится от этой болезни, умрет; хăтăлас çук — неотвратимый.

хăтăр—выдра.

хăтăр—угрожать; бранить, пробирать; пурне те хăтăрса тăкрĕ—всех пробрал.

хăтлан — поступать; делать, работать; есĕ пайан мĕн хăтлантăн—ты сегодня что наделал.

хăтлă—счастливый; пайран хăтлă пултăр—от богатства пусть будет счаслив.

хăтлă--опрятно, чисто; хăтлăрах ĕçле--опрятнее, чище работай.

хăтсăр—грязно, неопрятно; хăтсăр çырнă—неопрятно написано.

хăшĕ—который, какой; тахăшĕ—неизвестно который, какой; хăш чух иногда; епир хăшăмăр кунта йулатпăр? который из нас останется здесь? епир хăшăмăр аслă? который из нас старше? пирĕн йалта хăшĕ-хăшĕ халĕ те авалхи йалана тытса тăраççĕ, — в нашей деревне некоторые до сих пор держатся старой веры.

хĕвел — солнце; хĕвел тухат — солнце всходит; хĕвел анат—солнце заходит; хĕвел тĕслĕ тĕкĕр — солнцевидное зеркало; хĕвел хĕртнĕ вырăн — солнцепек; хĕвел çаврăнăç—подсолнечник; хĕвел тухăçĕ —восток; хĕвел анăçĕ запад; закат; кăн-

тăрлапа хĕвел тухăçĕ хушши юго-восток; кăнтăрлапа хĕвел анăçĕ хушши юго-запад; хĕвел анăçĕнҫи çил западный ветер; хĕвел тĕттĕмленни—затмение солнца; хĕвел ăшшипе (хĕвел çине, хĕвеллĕ çĕре) ан лар—не садись на солнышко; хĕвел сутти—луч солнца; хĕвел ури, х. йупи, побочное солнце.

хĕвĕ—пазуха.

хĕл—зима; хĕл ирттер—зазимовать; хĕл ерни кун—день зимней недели (зимнего праздника); вăл хĕлĕ-çăвĕпех кунта пурăнать—он живет здесь круглый год; хĕлле—зимой; аш-какайа вĕсем хĕлле кăна çийеççĕ,—они едят мясо только зимою; хĕл-хĕлле зиму зимовать; шăна хĕл каççан хура тулă лайăх пулать, теççĕ,—если мухи переживают зиму, то, говорят, хорошо уродится греча; хĕлĕн-çăвĕн и летом и зимою; Атăл пăрĕ ларпă ҫух ăçта хĕл-хĕлĕпĕр-ши хĕлсене? когда Волга будет покрыта льдом, где мы будем зиму зимовать; иртнĕ хĕлте—в прошлую зиму; хĕллехи ĕçкĕ—зимняя пирушка; хĕлĕпе—всю зиму.

хĕлĕх—струна; хĕлĕх тат—оборвать струну; кĕсле хĕлĕхĕсем—гусличные струны.

хĕлхем, хĕм, искра; блеск; вут хĕлхемĕ—искра; хĕм кăлар искриться.

хĕн, ыратни, ҫир, страдание, боль, болезнь; горе; труд; трудно.
хĕн-асап (страдание—мучение), мучения.
хĕн-хур—напасть; бедствие; несчастие.
хĕне—бить; колотить; вăрманта арăмне хĕнеме хулă тупайман, теҫҫĕ,—чтобы побить жену, не нашел в лесу прута, говорят.
хĕп; хĕп-хĕрлĕ совсем красный.
хĕпĕрте—радоваться; веселиться; савăнăр, хĕпĕртенĕр—радуйтесь и веселитесь; хĕпĕртеттер—натешить; хĕпĕртен—радоваться, веселиться; хĕпĕртӳ—радость, веселие.
хĕр—дочь; хĕр-аҫа девочка; ҫитĕнаĕ хĕр девушка; ҫураҫнă хĕр—невеста; хĕр-арăм женщина; хĕр сăри—девичье пиво, девичий пир; (происходил раньше между рождеств. и богоявлен. праздниками); хĕр аки малалла иртсе кайсан каллах хире ҫитерме илсе кайаҫҫĕ—когда этот плуг пройдет далее, то (скот) снова угоняют пастись в поле; хĕр килĕш, х. ҫураҫ усватать; хĕр-халлĕн девство; хĕрсем пĕве кайнă ҫух—когда девушки подростают; хĕр ҫумми—подружка; хĕр йăтаканни поднимающий невесту (из свадебного обряда).
хĕр—тлеть; тислĕк тĕмĕре хĕрет—навоз в куче тлеет.

